К27
Ч-39144

Марина Карягина

# Тăваткăл тĕлĕксем



Национальная библиотека ЧР
4-039144

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

*Асаннепе асаттене халаллатăп*



Кф

Марина КАРЯГИНА

К-84.09(=Чув)
К 27

ТĂВАТКĂЛ
ТĔЛĔКСЕМ
тетралоги

# талăй хули

поэма
иккĕмĕш кĕнеке

Кф.

художникĕ
Станислав Юхтар

ШУПАШКАР
«Руссика» - 2002

ББК 84 Чув
К21

ПРОВЕРЕНО
20 10 28 СЕН 2017

ч-39144

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

ISBN 5-87315-026-5

КАРЯГИНА М. Тăваткăл тĕлĕксем: Тетралоги / Марина КАРЯГИНА; Худож.:Станислав Юхтар. - Ш.: Руссика, 2002.- Т.2 :Талай хули.- 48 с.: ил.

© М.Карягина. Текст 2002
©С.Юхтар. Рисунки 2002
© О.Улангин. Макет 2002

*Талай хули... Мĕнлескер вăл, ăçта, чăннипех те пур е пур пек туйăнса ăса астарать кăна... Эпĕ ăна хама хам ăнкарма пуçланăранпах шырама тытăннă. Тăвата-пилĕк çулти хĕрача, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ йĕр леш енче унăн тăррине е тăррин çутине те пулин курас тесе, хуралтă çине хăпара-хăпара пăхаттăм... Çитĕннисем пире, шăкăр-макăра, ытарлăн кулса "Мускав кăтартмассерен" мана ыттисене курăнманни курăна-курăна кайнăн туйăнатчĕ... Тăпра айĕнчен япаласем тухнинчен тĕлĕнсе, таçта тарăнра çĕр çăтнă хуласем пурах тесе ăнтан кайса шухăшлаттăм... Асаннепе унăн амăшне, çĕр çула çывхаракан ват кукамая, ĕлĕкхи çинчен каласа пама ыйтса йăлăхтараттăм, тĕлĕксенче айван ăсăмра сăнарланнă "ĕлĕке" кураттăм... Анне çĕрлесерен вучах умĕнче çурма саспа юрласа ларатчĕ те, ун çумĕнче вут вылявне сăнаса ларнă май сăмахпа çемĕ асамĕнче çухалаттăм... Хам хĕрача иккенне тĕшмĕртме пуçламанскер, аттепе асанне ярса паракан юмахсенчи паттăрсем пек вăйлă, усалпа тĕрĕсмарлăха çĕнеесле хăватлă туя-туя каяттăм хама...*

*Пĕррехинче, кулленех ватти-вĕтти тенĕ пек кил тĕлне манса вылякан чăн чăваш вăййисем пуçланиччен, кĕтÿ кĕриччен, аслăрах ачасем пире тÿпем енче, тÿпе хĕрринче, чĕрĕ пуканесен пуйăсĕ иртсе çÿрет тесе илĕртнĕччĕ. Пуканисем хушшинче чат хам пеккине те тупма пулать иккен, вăл мана ăнланакан тус пулма пĕлет-мĕн, анчах вĕсене киле ертсе килме çук – кăмăлĕсене тупма хĕн, пуйăсĕ те ялан иртсе çÿремест, вăхăтне туяс пулать... Эх, çунса пурăнтăм вара çав юмах ĕмĕтре йăлтăрккаланса çитичченех, вăл чăн мар пуласран сехĕрленсе...*

*Тĕнче варрипе хĕрри çинчен пуç ватса тăранаймастăм пĕрмай... Пилĕкултă çулта хăйĕнпе хăй хуçа пек туйма пуçланă "арçын аппа" тĕнче хĕрри шыраса килтен тухса кайнăччĕ вара... "Çухалнăскере" виçĕ талăкран аран шыраса тупрĕç... Шалта-шалта пурăнакан ача ăсĕпе халь те ун чухнехиллех тĕлĕнетĕп: "эп çухалман-çке, эп хампах пулнă..."*
*Ÿснĕçем, ыттисем пек пулма хăнăхсах çитиччен, ачалăхăмра шыранă вăрттăнлăхсен асамĕ патне поэзи тавăрчĕ мана. Сăмах хăватне туйма вĕрентнĕскерĕмсене – тайма пуçах.*

*Ĕнтĕ икĕ ача амăшĕ те пултăм, пĕчĕкле вылйыман пуканесемпе халь вылятăп пулинех: телевиденинче пĕчĕк аптраман таврашсем валли фильмсем, телекăларăмсем хатĕрлетĕп. Ачасенчен те, поэзирен те уйрăлма пултарай масăр, вĕсем пулăшнипе – вĕсем витĕр – çаплах хамри Ачалăх Тĕнчине уçатăп. Тен, талай хули те – хамăртах, таçта, таврăнми таракан ачалăхăмăрта...*

автор

**1.**

Вут кайăксем
уйăх витĕр
вĕçеççĕ,
хĕвел çине
лара-лара
канаççĕ.
Шухăшăмсем – вĕçенкайăксем,
ăçта кăна
çитес çула
виçеççĕ?

Уй-хирĕмре
ӳсет Алтăр çăлтăр
(тăвăл килтĕр –
аври ан ху-
çăлтăр).
Уй-хирĕмçĕм-тӳпе,
çăлтăр ани,
киммĕм йĕри-тавра çăлтăр анни.

Шухăшласан –
шухăш çаврăнать:
шух ăс çумне
шухăш явăнать.

Шухăшăмсем!
Миçе çавраран
ÿссе çитĕр
кирлĕ пек таран?
Шухăшăмсем чарусăр –
çаруран,
чуралăхран тарать,
пур чаруран.
Сăннипелех типнĕ хуртсем пур –
Халь тин сăнни тирмест терĕм пуль ...

Асаттесем тур лашине тăварнă,
Çитес çĕре çитме хушса хăварнă.

## 2.

Урхамахӑм юртти –
тӑват ура,
тӑват ури тӑвать
тӑват йӗр –
тӑват уран пусать
ан тейӗр,
тӳсмелле мар йывӑр
ан тийӗр.

## 3.

мĕн шутлă ку утлă эртел?
çав алăк – хуппи – ман...
те кăмăл хуралнă тĕл-тĕл,
те каç пĕтĕмпех кайман:

хура – хурлăханăм! – (харап...)

чĕрĕ!
тĕвĕ те, тăвĕ те!
çакна ăнланса – хăрап:
чĕрик! тăвĕ те...

## 4.

инçе те мар çав йӗр, куçа та курăнать –
(çӗрпе тӳпе хӗрри пӗлет çав хулана) –

çав чикӗ леш енче – те шыв тӗнчи, те пӗлӗт:
ишет-и сăр* хули, вӗçет-и? – çуккă тӗлӗ –

утатпăр çил сирсе талай** хули енне,
анчах пӗлмен çав йӗр витлевлӗ иккенне:

эпир чупсан – чупать, эпир утсан – утать,
лаша кӳлсе тухсан – вăл хăй тухать ута

хӗвел кăна унта кая-кая килет
(килне кайса килет: хăватланса килет!)

кайри урапине мала яман пек лав,
телей хули – талай хули – астарӗ шав...

---

**вăрттăнлăх*

***инçетри çитсе кураймасла тăрăх*

**5.**

шур шупăрлă хулаçăм, Шупашкар –
шыв-пăрлă ман Шăпа та Шăпашка!

çу-кĕр çăкне çĕклет çăка папки...
хапи те пур Хуламăн, пур хапхи:

(ăçта кайса çухалнă хăраса
пĕр хушă эпĕ пулнă хĕрача?

ăçта тата, ăçта çав улача
кĕпеллĕ çилхăван – пĕр ыл ача?)

вăхăтăма тухат, шывăм, тухат, пăр! –
хапха витĕр – кĕпер витĕр тухатпăр...

пĕкĕ витĕр – пĕкĕн, тăхăм, – тухатпăр,
çĕрĕ витĕр – хĕвел витĕр пăхатпăр!

хăла çăмна вĕçтер, ут – ан пашка!
хăна хули, Хулаçăм, Шупашкар...



## 6.

мана кирли йӑлтах ҫак Лавккара
лав хатӗр те – суйлав кӑра:
суй – лав, суймасӑр – лавсӑр-и?
суйсан та, суймасассӑн та тӑр лавсӑр,
хам мар, лав мар, Лавкки ҫапла тӑрлавсӑр

## 7.

мал енне утатăп ĕнсепе,
тĕлленмешкĕн куçлăхпа выртатăп
ĕмĕрĕм – пĕр татăк
татăкĕ таран пăрта-тăк,
мĕн тума мана тарай кĕпе?

телейли ӳтленнĕ кипкепе,
эп пур – тенкĕпе
ӳтсĕрленĕпин пурттенккепе
кепе,
мĕн унччен юласшăн эп эппе!

пăр та урăх ятлă вĕрире! –
кăшт кăна курасшăн ир ире –
тĕтре...
тĕтре...
тĕтре...

## 8.

тем пурнăçна пăссан,
лар та таçта ăсан:

(уйăх – сан хыççăн, туй эс!)

шав шухăшла та пуй, ăс!

тĕлĕк тиенĕ пуйăс
пĕр вырăнтах кусать –

те çĕр,
те пуçăм хытă çаврăнать...



## 9.

çиçе-çиçех кĕлленнĕ килсĕр çиçĕм,
сивве пула Хуламăр пĕчĕккиççĕ –
тӳпе пушаннă
ман тупана элле вăл кăлăх шаннă:
(хĕлхем халне хĕвре хĕл каçарасшăн
хĕмленнĕччĕ мĕнпур йĕри-таврашăн...)

кĕл варĕнче те асилӳ пурах-тăр –
хĕл варринче аça çапса пăрахтăр!

Ч - 39144

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## 10.

эп
тӳпене
хур тĕкшĕн
улăхман

(улăха мар,
хуласене те
уртса ҫӳретпĕр
халь ҫие)

ҫиле
шанса
каланисем
ҫӳле
ҫитмен
сапаланмасăр –

сапакара кăна,
палан,
упранĕ
сирĕн масăр

## 11.

ку тум-тирпе вĕçме пӳрмен çынна

çӳл тӳпене ăмсанакан çырма
шыв халлĕнех вĕçерĕнсе вĕçесшĕн:
пур тĕнчене кура çа-вăр!-ăнать –
(ăнать тесе ĕçес-ши?) –
çав выр!-ăнах авăрланса анать





## 12.

савни мана савми пулсан,
эп, сарӑ кайӑк,
сасартӑк сассӑма манса
чӑл-пар саланӑп,

тусан мана савми пулсан
тин вӗҫсе кайӑп...

## 13.

ют çулсем çын çӳретеççĕ,
çил çĕклем йăтать чĕвен,
тем, хăй йĕкĕр-ши? – хĕвел
пуррине икшерлетесшĕн;

чап-и, чĕп-и, çӳп-и, çип-и –
ман çула татса çӳрет,
шыв юхса çитес çĕре
кĕперсем кĕпĕрленни пек! –

ку – кĕпер çинчи хăрав-тăр:
урлă çӳрекен хăратăр

## 14.

курак йăви çӳллĕшĕнче
курак кӳрши эп
çул леш енче –
кăра пăр çийĕ:
мĕлкемĕрсем
хура хурах пек
пурăнаççĕ



## 15.

куракăм
хаш сывлать,
ун хыççăн – эпĕ те:
шавла-шавла-шавла
çаплах сас типĕ, теп

## 16.

тăваткăл сывлăшăм!
(тăваткăл – унăн та)
ак уçă ывăçăм –
эп, кĕлмĕç, умăнта:
алла кĕмелĕхне
хур манăн ывăçа

алра – кĕмĕл ĕшне!
эп акнă йывăçа
курак чĕппи иленнĕ:
ĕмĕлкеленнĕ
çул тепĕр енĕ

## 17.

çил тĕнчеме силлет енчен енне
курак йăви сăпка пек силленет
чĕпписене чĕппи, тен, тĕлленет
çăмартари чĕп темшĕн тĕлĕнет

## 18.

чăтас  килниччĕ кайăк сассинче те
мĕне шансаччĕ – чăтлăх персе ячĕ:
чĕлхем çине юласшăн ырă ячĕ
çил çиессишĕн çын та тем те чăтĕ

## 19.

Ман халăхăн – тарăн куç, малашлăха тăраннă:
çыраймáнни пуçтараннă, калайманни,
куç çутине кун çитменни – хĕвел анни
(е хĕвеле ĕне çиме пуçланă?)
Çил çиессишĕн çын та тем те чăтĕ...
Чакать-чакать-чакать хĕвелĕн çăкĕ:
иккен пайăркисем шух çилшĕн – тилхепе,
иккен ситрелнĕ ун тĕл-тĕл хапи.
Çил çиессишĕн элчеле чаратпăр,
çилпе пĕрле хĕвел çисе яратпăр.
Атьăр апла, хевтеллисем, хĕвелленер!
Мĕн юлнă пекскере тăхăнтартар йĕнер,
хушар ăна шума хушнă енне,
хунаттарма майне тупар, йышне хушар,
хунар евĕр хунатăр хăнамăр –
килен-каян килентĕр, Хуламăр!
Пылпа çăкăр сĕнсессĕн кăна мар
ачи-пăчи шыратăр шăлавар –
пĕлĕт сирсе пирĕнпе сапăр пулма,
йăлтăр-р кулма!

Марина КАРЯГИНА



Хĕвел кăна пĕтĕ мар теттĕмĕр –
хистерĕ пĕтĕмлĕх тĕттĕмĕ:
ĕрче, хĕвел, ĕрче, ĕрчевлĕ пул,
йăлтăрин кул!



## 20.

Тӳнтер те пăхрăм пиччĕн талăка,
йĕрке мĕнне пĕлме йĕркесĕрлентĕм:
çĕн уйăхпа çĕн хĕвеллентĕм ĕнтĕ
(сĕм тăлăхсем палларĕç тăлăха).

Талăкăмра шырарăм алăка:
талай уйсем – таланăм*-талан марăм...
Ик аллăмпа хама ыталаймарăм –
шухăшăмпа тĕнче ыталакан!

Тĕнчи те çĕрсерен çеç – яр! - тăр. Ак!
(Чи тĕттĕм çĕрсенче – чи янкăр тĕлĕк!)
Куçа курăнманнин те пур -çке тĕлĕ:
тĕнче сăнне йăлт курасла – тăрап:

тĕнче хамне манса – тулта шырап.

*ăраскал

## 21.

çил океанĕнче
кĕр ăсталать пек икебана
çиле те чикĕ панă!
кăк çуккă анинче –

çавраçилленнĕ мĕн пурри:
ури-ури-ури-ури!

## 22.

Çил валли те – янтă çырансем...
Çĕр ăсра çеç Атăл-пиçиххиллĕ:
çакăнтах таврăнасса пĕлсен,
пĕлĕт кăтартса юхинччĕ киммĕм –

пĕлĕт умĕнче эп месерле.
... Юханшывăм вырăншăн кĕрленĕ:
ĕмĕрлĕх тĕпленнĕ пек – хĕлле:
сасăсăр та, куçăмсăр та енĕм,

(пăр çине ӳпне выртса итлем-и?!.)



## 23.

эп ывăçра курасшăн ĕмĕр –
ăса тăп чараятăп-шим? –
пурăнăça ăсатăп – чим! –
тусан аса ма тасатать?! –
ăсмасть-мĕн ывăç – ăсатать...
ку асама чĕркĕмĕлпе* чĕркенĕ:
чĕм ывăça – теме те çĕнччĕр! – кĕмĕ

*ртуть*

## 24.

куçкĕрет
кайрĕç эп курма хăнăхнисем –
хăнасен Хули ку, хăнасен! –
çуркунне те вĕçĕмсĕр тесе –
ним юлми çу сутăнчĕ  кĕре –
çунă хушăрах пăрланчĕ çумăр –
ку та шунă-ха тесе эсир те шумăр:
эп – хĕл урлă талккăшăм юлас пек –
талкăшатăп пĕр пĕлмен çĕре

## 25.

палласа çитрĕм эп ăна
вăл пач та хăруш мар –
вăл чап пек витĕр шурă
çук шăрăх шухăшăн сив-ви-
лĕм çил те çук
çук ӳ-ӳ-ӳ!-лĕм
ун ячĕ те ачаш:
ви-лĕм

пурăнăç чылай хăрушăрах



**26.**

хăна Хули – хăнăхуллишĕн мар,
хăнăхулли – хăна Хулишĕн мар,
тĕнче шантарччăр (е хула кăна) –
çак тĕнчере камах хурах хăна?



## 27.

сикки-сикки т(ӑ)ват кӗтес,
сикмессерен пӗр кӗтес,
малти кӗтес, кайри кӗтес,
сулахай кӗтес, сылтӑм кӗтес,
ман пуласси хӑш кӗтес?

Турӑ маннӑ кӗтесре
шанӑр тур кӗтессине!
(пӑхса тӑтӑр-им эсрел
шур тӑваткӑлӑм ҫине?!.)

сикки-сикки т(ӑ)ват кӗтес,
сикмессерен пӗр кӗтес...

сипне тӑкать мул енне –
Алтӑр ҫӑлтӑр ӳпӗнет:
Турра сутса янине –
сутса яччӑр тӳпене!

сикки-сикки т(ӑ)ват кӗтес...
туртмассерен ҫур йӗтес...

## 28.

япалаланнӑ шухӑшу,
ҫын, хуҫине вилӗмсӗре хӑварнӑ...
эп утӑма чӗр чунранах кӑкарнӑ –
ҫак йывӑҫсӑр чӑн тусӑм ҫук:

эп лартнӑччӗ ӑна пӗччен тесрен,
ҫак сывлӑша эс тивӗҫ мар тесрен,
тӑват хӑмалӑх...
хӑналӑх ҫеҫ эпир, тӑван, хӑналӑх!

## 29.

япалаланнă шухăшсем
мана чура туса хурасшăн
эй, хурăнташăм,
ман аташăм,
ташă –
чуралăхран çăлаканни!
вĕлкĕшӳре çак мăшăр алă
(ал – ылтăн сăнчăр-вăчăраллă...) –

манăн ту-
та-
шă-
па-
тĕнче
кулса кăна тăрать тĕнче!



**30.**

этем те – туррӑн шучӗ çеç
(этем те – туррӑн шӳчӗ çеç):
япалаларӑм шух ӑса –
каллех тухатӑп шухӑша

*2000-2001 çç.*

Марина Федоровна Карягина

Ӑваткӑл тӗлӗксем / Квадратные сны
Тетралоги / Тетралогия

Иккӗмӗш кӗнеке / Вторая книга

Талай хули / Неведомый город
Поэма

На чувашском языке

Рисунки Станислав Юхтар

Редактор А.И.Дмитриев
Макет, верстка О.А.Улангин
Корректор М.Ф.Степанова

Типография издательства «Руссика»
Лиц. ПЛД № 27-50 от 19.10.98 г.
Чебоксары. ул.Афанасьева, 12
Заказ №345.
Тираж 300экз.


издательство
РУССИКА